28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
14
ЫТЛАРИКУН
156(6907) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 12-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелт ухăçĕнче совет çарĕсем, тăшманпа çапăçса Маньчжури çĕршывне шалалла кĕрсе пынă.

Приморьере ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔ НЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем сăртлă-вăрманлă йывăр вырăнсенче малалла наступ лени туса пынă, МИШАНЬ хулине, ХУНЬЧУНЬ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çаван пекех тата ГАОЛЬИН, ХАДАХЭ, ДАДУЦЗЫЧУАНЬ НАОМУГОУ, ЛАОХЭЙШАНЬ, ХУАНГОУ, ЭРДАОХЭЦЖИ ятлă пысăк ялсене йышăннă, 15—35 ки лометр малалла кайнă.

ХАБАРОВСК хулинчен кăнтăр-хĕвелан ăçнерехре ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсем, Амур шыв флотили йĕн карапĕсемпе килĕштерсе çапăçса, АМУР шывĕн кăнтăр çыранĕнче СЯОШАНЬ, САНЦЗЯНЬФАН, ЮАНЬЧУАНЬТУНЬ ятлă ялсене тата СУНГАРИ шывĕпе УССУРИ шывĕ хушшинче ФУТИН, ХОЮТЖЕНЬ, ДАЯХЭС, ДАДАЙХЭ, САНЬИТУНЬ ятлă ялсене туртса илнĕ. БЛАГОВЕЩЕНСК хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре фронт çарĕсем ХУНЧЭ хулине, АЙГУНЬ чугун çул станцине тата халăх пуранакан ытти темиçе пункта йышăннă.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ фронт çарĕсем ХАЙЛАР—ХАРБИН чугун çулĕ тăрăх наступлени туса пынă, ЯКЗШИ хулипе чугун çул станцине çапăçса туртса илнĕ тата МОГОИТУЙ ялĕпе ГОРНОР ялне йышăннă.

Фронтăн çăмăллăн куçса çӳрекен çар ĕçĕсем чылай участокра Пысăк Хинган тăвĕ урлă каçнă та унăн хĕвелтухăç енне пырса тухнă.

Лăпкă океан флочĕн карапĕсемпе десант чаçĕсем японецсен ЮКИН тата РАСИН тинĕс порчĕсене çапăçса туртса илнĕ. Августăн 10-мĕшĕпе 11-мĕшĕнче Лăпкă океан флочĕн карапĕсемпе авиацийĕ тăш манăн Сурçĕр Корея порчĕсенчи тата уçă тинĕсри карапĕсемпе транспорчĕсене пыра-пыра çапнă. Çаван чухне, Совет Информаци Бюровĕн августăн 11-мĕшĕнчи свод кинче пĕлтернисемсĕр пуçне, японецсен тата 2 миноносецĕпе 14 транспортне шыв ва путарнă.

Пирĕн авиаци Маньчжурири чугун çул узелĕсене пыра-пыра çапнă.

АВГУСТĂН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 13-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелту хăçĕнчи совет çарĕсем Маньчжурире малалла наступлени туса пынă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-мĕш ФРОНТ çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, ХУЛИНЬ (Хэйцзуйцзы), ДУНАНЬ хулисемпе пысăк чугун çул станцийĕсене, ЛИНЬКОУ хулипе чугун çул узеляне, ТАЙМАГОУ, МАДАОШИ хулисемпе чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ, çаван пекех тата САНЬФЫНДУЙЗР, НЯНЬЦЗЫГОУ, УДАОГАН, ШИТОУХЭТЦЗЫ, СЫФАНЬШАНЬ, ДАХУАНГОУ, ЛИЦЗЫГОУ, БАНЬБАТОУ, ЭРДАГОУ, ПОНАШИГОУ ятлă ялсене йышăннă, 14—45 километр малалла кайнă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-мĕш ФРОНТ çарĕсем, СУНГАРИПЕ УССУРИ шывĕсем хушшинче наступлени туса 15—40 километр малалла куснă, ХАЙЛУ (ЦУЦЗИНЬРЕН 20 километр хĕвеланăçнерех), ЭРДАОГАН, ЦУЦЗИНГАН, ХАМАТУНХЭ ятлă ялсене йышăнса илнĕ.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарĕсем тăшманăн Халун-Аршан çывăхĕнчи тĕреклентĕ районне татнă та ХАЛУН-АРШАН хулине туртса илнĕ. Санăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем Пысăк Хинган ту хыр çи урлă каçса СОЛУНЬ тата ВАНЕМЯО хулисемпе пысăк чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Фронтăн Хайлар—Харбин чугун çулĕ тăрăх наступлени тăвакан çар ĕçĕсем МЯНДУХЭ чугун çул станцине йышăннă.

Пирĕн авиаци Маньчжурири чугун çул узелĕсене пыра-пыра çапнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

В. М. Молотов Свенто господина йышăннă

Августăн 11-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв министрне Р. Е. Свенто господина йыĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов шăннă. Финляндин Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ

Арми генералĕ Эйзенхауэр Мускава килни

Августăн 11-мĕшĕнче Берлинран Москава арми генералĕ Дуайт Д. Эйзенхауэр килсе çитнĕ. Унпа пĕрле çав самолетпах Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков килнĕ.

Эйзенхауэр генералпа çаксем килнĕ: генерал-лейтенант Люшьес Д. Клей, бригадăй генерал Томас Д. Дэвис тата Эйзенхауэр генерал ывăлĕ—лейтенант Джон С. Эйзенхауэр.

Центральнăй аэродромра вĕсене çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: Генеральнăй Штаб начальникĕ арми генералĕ А. И. Антонов, авиаци маршалĕ Ф. Я. Фалалеев, генерал-лейтенант Н. В. Славин, Москав хулин комендантĕ генерал-лейтенант К. Р. Синилов, Оборона Халăх Комиссариатĕн тулашри сыпăнусен отделĕн начальникĕ генрал-майор М. П. Кутузов тата Оборона Халăх Комиссариатĕнчи ытти ответлă работникĕсем.

Çаван пекех тата çаксем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен посолĕ В. А. Гарриман господин, Америкăн Совет Союзĕнчи çар миссийĕн пуçлăхĕ генерал-майор Джон Р. Дин, Великобритани посолĕ сэр Арчибальд Керр, Англин Совет Союзĕнчи çар миссийĕн пуçлăхĕ генерал-лейтенант Гаммель, Франци республикин посолĕ генерал Жан Катру, Китай республикин посолĕ Фу Бин-чан господин тата ытти.

Хирĕç тухса кĕтсе илнĕ чухне хисеплĕ хурал тăратнă, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă. Хисеплĕ хурал рапортне йышăннă хыççăн чапла марш пулнă, вара арми генералĕ Эйзенхауэр радио тăрăх саламлă кĕске сăмах каланă.

Кăсхине Генеральнăй Штабра Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков тата арми генералĕ А. И. Антонов, арми генералĕпе Эйзенхауэрпа тĕл пулнă, тĕлпулура Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен посолĕ В. А. Гарриман господин пулнă.

Çав тĕлпулура арми генералĕ Эйзенхауэр Трумэн президент хушнипе арми генералне—Антонова тава тивĕç ĕçсен главнăй командор орденне панă.

ХĔРЛĔ ÇАРТАН ТАВРĂНАКАНСЕНЕ ЧУХНЕ ПАРАКАН

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул ĕçĕсен комитечĕ Хĕрлĕ Çартан тавраналансене аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ чухне тĕрлĕрен çăмăллăхсем памалла тунă.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çара е Тинĕс-Çар Флотне илнĕ аслă шкул студенчĕсем, техникумсенче вĕреннисем Хĕрлĕ Çартан тавраннăсан, вĕсем хăш курсран кайнă çав курсах вĕренме кĕме пĕлĕç, вĕсем хăйсем вĕреннĕ аслă шкула е техникума, е урăх çаван пек аслă шкулпа техникума кĕме пултараççĕ.

Хĕрлĕ Çартан тавраннăсем, вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнă пулсан, кирек хăçан та аслă шкула испытани тытмасăрах кĕреççĕ. Çаван пекех вăтам шкулăн çичĕ класне отличник аттестачĕпе вĕренсе пĕтернĕ пулсан, техникумсене испытани тытмасăрах вĕренме кĕреççĕ.

Аслă шкулсемпе техникумсене испытанисем тытса кĕнĕ чухне испытанисене ăнăçлă тытнă пулсан, Хĕрлĕ Çартан тавраннисене конкурссăрах илеççĕ.

Хĕрлĕ Çартан тавраннăсене методика тĕлĕшпе пулăшу парас тесе, кăçал аслă шкулсем çумĕнче подготовительнăй отделенисемпе курссен хисепне самаях нумайлатнă. Çав отделенисене Хĕрлĕ Çартан тавраннисене вăтам шкултан вĕренсе тухнăскерсене е вăтам шкулăн 9-мĕш класне вĕренсе пĕтернĕскерсене, анчах та Хĕрлĕ Çара илнĕ пирки малалла вĕренме чăрăннăскерсене илеççĕ. Курссене вăтам шкултан вĕренсе тухнăскерсене илеççĕ. Çавсенчен вĕренсе тухнă хыççăн, вăтам шкул вĕренсе пĕтернисем тӳрех аслă шкула кĕме испытанисем тытмасăр, 9-мĕш класс вĕренсе пĕтернисем пĕр-пĕр вăтам шкулта аслă шкула вĕренме кĕме тивĕçлĕ пулни çинчен калакан аттестат илме экзаменсем тытаççĕ. (ТАСС).

ЭНЕРГЕТИКСЕН ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОНКУРСĔ

Электростанцисен Халăх Комиссариачĕ электричествăпа ăшă энергине перекетлес тĕлĕшпе пыракан чи лайăх сĕнӳсен Пĕтĕм Союзри конкурсне иртерме йышăннă.

Конкурс тĕллевĕ—энерги нумай тухакан агрегатсен ĕçĕнче энергие перекетлемелли çĕнĕ режимсем тăвасси, электричествăпа ăшă сармалли пралуксемпе трубасенче, электричество кăмакисенче, электротранспортра энерги перекетлесси тата техникăллă çĕнĕ майсемпе ытларах усă курасси пулать.

Конкурса энергетиксем, механиксем, технологсем, наука работникĕсем, изобретательсем, рационализаторсем, çаван пĕкех наукăпа тĕнче учрежденийĕсемпе организацийĕсен коллективĕсем хутшăнма пултараççĕ.

Чи лайăх сĕнӳсемшĕн çакăн пек премисем памалла тунă: 15-шер пин тенкĕлĕх 3 преми, 10-шар пин тенкĕлĕх—5 преми, 5-шер пин тенкĕлĕх—10 преми, 2-шер пин тенкĕлĕх — 25 преми тата 1000-шер тенкĕлĕх—40 преми тунă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тыра вырнă
Пăрачкав	14,9
Елчĕк	14,0
Советски	13,9
Вăрнар	13,7
Чкаловски	12,6
Етĕрне	10,8
Калинино	10,1
Чурачăк	9,6
Комсомольски	8,5
Çĕмĕрле	7,0
Сĕнтĕр	6,9
Хĕрлĕ Чутай	6,6
Муркаш	6,3
Красноармейски	6,2
Октябрьски	5,9
Вăрмар	5,5
Тăвай	4,9
Шăхасан	4,7
Çĕрпӳ	4,6
Улатăр	4,2
Кувакино	4,1
Шăмăршă	3,8
Куславкка	3,8
Сĕнтĕрвăрри	3,4
Канаш	3,4
Первомайски	2,4
Шупашкар	2,3
Йĕпреç	2,3
Ишлей	2,2
Элĕк	2,2

Ырăш вырса пĕтернĕ

Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз (председателĕ Тихонов юлташ) августăн 12-мĕшĕ тĕлне ырăш вырса пĕтерчĕ. Кунта уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ Малтанхи кунран пуçласах 4 жнейкăпа вырнă. Ырăш вырма тухнăранпа çумăрçăр кун пулман, анчах та уяр вăхăтăн кашни сехетĕпе усă курнине пула, кунта машинăсемпе, çурласемпе выраканскем кулленхи нормăна ялан тенĕ пекех тултарса пынă. Халĕ колхоз авăн çапма тытăнчĕ. Паян ырăш акма тухать.

«Богатырь», «Красный Октябрь» тата «Красный бригадир» колхозсем те паянхыран ырăш вырса пĕтереççĕ.

ЫРĂШ АКАÇĔ

КАЛИНИНО, августăн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районăн чылай колхозĕн ырăш акаççĕ. 13 колхозран илнĕ даннăйсем, тăрăх, паянхи кун тĕлне пурĕ 127 гектар акнă. Ырăш акасси «Сутталла», «Броневик», Калинин тата Мичурин ячĕсемпе тăракан колхозсенче ăнăçлă пырать. Çак колхозсем икĕ кун хушшинче каннăнех вунпăр гектар акнă. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕ ырăш çапса акаççĕ, ăна витĕ итемсенче, лупасайсенче çапаççĕ. Хĕвеллĕ вăхăтра кĕтесене усă вырăна кăларса типĕтеççĕ, çумăр çывхара пуçласанах, çумăр тивмен вырăна кĕртеççĕ. Çапла ĕçлесе кунта вăрлăх çителĕклĕ хатĕрленĕ. Паян районри пур колхозсем те ырăш акма тытăнаççĕ.

С. САПЕРКИН

Ĕçе организацилемен çĕрте

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). «Пахарь» колхоза пырса кĕрсенех, кунта ырăш вырма тытăнманнине куратăн. Колхоз правленинче 4—5 çын юмах ярса лараççĕ, вĕсемпе пĕрле колхоз председательĕ Иванов та ларать. Урамра пӳрт умĕнче хĕрарăмсем алăç тăваççĕ, çырмасенче кĕпе çăваççĕ. Колхоз председательĕпе колхозри парторганизаци секретарĕ Филиппов ырăш пуссине те тухса курман. Жнейкăсем ялтах лараççĕ, кунта çаплах суйласа выраççĕ. Колхозниксене уйрăм сдельщина çинчен ăнлантарса паман, çавна пула суйласа вырнă чухне те пурĕ пĕрле ĕçлеççĕ. Ĕç пахалăхĕшĕн тăрăннаççĕ, шутласа пăхнă тăрăх, кашни тăваткал метрта 19—35 пучах таккаланса юлать. Вĕсене пухмаççĕ. Вырнă хыççăнах сыснасем тата ытти выльăхсем «пухаççĕ».

Колхозра 3 жнейка, креплеллĕ 60 çава. Вĕсемпе усă курман тата усă курма та шутламаççĕ. Колхозра столовăй та, ача ясли те çук.

С. ШАДИН.

Шыв арманĕсем юсаççĕ

Йĕпреç районĕнчи «Искра», «Герой», «Красный водник», «Смычка» тата ытти хăшпĕр колхозсен шыв арманĕсене кăçал шыв ватса кайнăччĕ. Ырăш вырма тухаччен нумай малтан çак колхозсем пĕвсене юсаса армансене ĕçе ячĕç.

«Искра» колхозăн халĕ икĕ чуллă шыв арманĕ ĕçлет.

П. КУРАКОВ.

Ырăлăн çĕнĕ сортне ӳстерни

СССР Наука Академийĕн Казахстанри филиалĕн Алма-Атари ботаника сачĕн участокĕсенчен пĕринче тĕлĕнмелле ырăш ӳсĕт. Вăл ырăш вир пек сарăлса ӳсет. Çав ырăнăн сорчĕ питĕ тухăçлă, унăн тĕшши те шултăра та сĕткенĕ. Пĕр тĕп ырăнра 60—70 пучах пулма пултарать. Иртнĕ çулта çанталăк ăнăх пулнă пулин те, çаван пек ырăш акнă участок çинче пĕр гектар çинче 35 центнер тырă туса илнĕ. (ТАСС).

Физкультурниксен Мускавра пулса иртнĕ Пĕтĕм Союзри парачĕ

Августăн 12-мĕшĕнче Мускавра, Хĕрлĕ площадьре физкультурниксен Пĕтĕм Союзри парачĕ пулса иртнĕ, унта 23.000 çын хутшăннă.

Совет Союзĕн мĕнпур 16 республикинчен çамрăксен представителĕсем пухăннă çав парад чаплă та илемлĕ иртнĕ.

Трибунăсем çинчен физкультурниксене —Таван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсене хĕрӳллĕн саламлаççĕ. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче пирĕн физкультурниксем çапăçупа ĕçре пысăк паттăрлăх кăтартса пачĕç.

Пирĕн Таван çĕршыв çуркунне аслă Çĕнтерӳ уявне уявларĕ. Хĕрлĕ Çарăн полкĕсемпе дивизийĕсем çапăçусен чаплă та паттăр çулне утса тухрĕç, вĕсем Берлин çине Çĕнтерӳ ялавне çĕклерĕç, Хĕвеланăçĕнче фашистла немĕç агрессийĕн вучахне яланлăхах аркатса тăкрĕç. Анчах Хĕвелтухăçĕнче вăрçă вучĕ çаплах ялкăшать-ха, ăна гитлерла Германи союзникĕ—Япони милитарисчĕсем пуçласа янă. Хĕвелтухăçĕнче агрессин иккĕмĕш вучахĕ пур чухне, çинсен ирĕклĕхне, телейне, никама пăхăнманлăхне ăратса тăракан вучах пур чухне этемлĕх лăпкăн пурăнма тата ĕçлеме пултараймасть. Пĕтĕмĕшле мирлĕ хăрушсăрлăх интересĕсемшĕн пирĕн Правительство Япони империалисчĕсене хирĕç вăрçа тухасси çинчен историллĕ решени йышăнчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăра боецсемпе офицерсем, аслă Сталин ятне асра тытса, кĕрешсе çĕнтерчĕç. Аслă Сталин ятне асра тытса, паян вĕсем агрессин юлашки вучахне штурмлаççĕ, халăхсене мир тата лăпкă та телейлĕ пурнăç туса парасшăн кĕрешеççĕ.

...Пиншер арçынпа хĕрача—спортсменсем паян пирĕн хуласенчи урамсемпе площадьсем тăрăх утса тухаççĕ. Вăл çамрăксемпе эпир тивĕçлипех мухтанса савăнатпăр. Физкультурниксен нумайĕшĕн кăкăрĕсем çинче орденсемпе медальсем çиçсе тăраççĕ. Таван çĕршыв вĕсене çамрăксен кĕрешӳпе ĕçри паттăрлăхне палăртса пани. Вĕсем пурте—вăрçăн йывăр çулне утса тухнисем те, тин çеç пурнăç çулĕ çинĕ тухакансем те—социализмлă Таван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăнса, унпăн ĕçлеме мĕнпур вăйне хума хатĕр. Мухтав вĕсене, çамрăк патриотсене, совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕсене!

Пиншер Мускав çынни августри çак хĕвеллĕ кун çамрăк физкультурниксене курас тесе урамсене тухнă. Çамрăкпах, илемлĕх, спортсменсен утти пурне те савăнтарса тĕлĕнтернĕ.

Авалхи Хĕрлĕ площадь паян хăй те çамрăкланнă пекех. Пур çĕрте те симĕс йывăççем, чечексем.

ГУМ çурчĕ çинче—Ленинпа Сталинăн пысăк портречĕсем. Вĕсен хушшинче — пысăк ялав макечĕ. Ун çинче çапла сырнă: «Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин Партийĕ сывă пултăр!» ГУМ çурчĕн икĕ айккинче ВЛКСМ значокне тата ГТО значокне ӳкерсе çакнă. Вĕсен хушшинче лозунгсем: «Аслă совет халăхĕ—халăхçĕнтерӳçĕ сывă пултăр!», «Пирĕн хăватлă Совет çĕршывĕ сывă пултăр!»

Трибунăсем çине нумай йышлă хăласем тухса тăраççĕ. Вĕсен хушшинче столицăри паллă çынсем, Мускав предприятийĕсенчи стахановецсем, паттăр Хĕрлĕ Çарăн представителĕсем, наука, искусство тата литература деятелĕсем. Хăнасем хушшинче —Болгари, Польша, Югослави, Албани, Финляндин çамрăкĕсен делегацийĕсем.

* * *

Мавзолей трибуни çине Сталин юлташ тата Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Андреев, Жданов, Микоян, Хрущев, Берия, Маленков, Шверник, Вознесенский, Булганин, Попов, Шкирятов, Жуков, Буденный, Антонов, Воронов, Хрулев, Меркулов юлташсем хăпараççĕ.

Арми генералне Дуайт Д. Эйзенхауэра та трибуна çине улăхма чĕнеççĕ. Арми генералĕ Эйзенхауэр США посолĕ Гарриман господинпа пĕрле трибуна çине хăпарать.

Хĕрлĕ Площадь пухăннисем Çĕнтерӳ тăвакана—аслă Сталин юлташа тата унăн соратникĕсене нумайччен алă çупса тата «ура» кăшкăрса саламлаççĕ.

Кремль сехечĕ вунпĕр çапрĕ. Спасски ханхаран парад йышăнакансем—ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Секретарĕ Михайлов, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитетăн Председательĕ Романов, ВЦСПС Секретарĕ М. П. Тарасов юлташсем тухаççĕ. Парад командующийĕпе К. Р. Синилов генерал-лейтенантпа пĕрле вĕсем физкультурниксен умĕнчен иртеççĕ. Çаван хыççăн Романов юлташ трибуна çине хăпарать те парадри физкультурниксене саламлă сăмах калать.

Совет Союзĕн государство гимнĕ чаплăн янăраса каять.

— Чаплă маршпа малалла!—илтĕнет команда.

Шăплăхра барабан сасси янраса каять. Çамрăк барабанщиксем, шурă кительсем тăхăннăскерсем, мавзолей патĕнчен иртсе каяççĕ. Çавăнтах площаде 500 спортсменран тăракан малти колонна пырса кĕрет. Колонна умĕнче—Совет Союзĕн çав тери пысăк ялавĕ, ун хыççăн Совет Союзне кĕрекен мĕнпур 16 республикăн ялавĕсем. Спортсменсем «Çĕнтерӳ» орденĕн пысăк макетне йăтса пыраççĕ. Тĕрлĕ спорт обществисен тĕслĕ ялавĕсем вĕлкĕшеççĕ. Физкультурниксем Сталин юлташăн тата ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро членĕсен портречĕсене çĕклесе пыраççĕ.

Мавзолей патĕнчен парад уттипе 16 союзлă республикăсенчи физкультурниксен 12 пин çынлă колонни иртсе каять. Çав колонна аслă совет державинчи халăхсен пĕрлĕхĕпе туслăхне кăтартса парать.

Физкультурниксен кашни делегацинех хăйсен костюмĕсем тăрăх пĕлме пулать. Вырăс тĕррипе илемлетнĕ пурçăн кĕпесемпе РСФСР физкультурникĕсем иртсе каяççĕ.

Колонна çийĕнче пит пысăк лозунг ялкăшать: «Пирĕн ĕç тĕрĕс—эпир çĕнтертĕмĕр!» Çамрăк спортсменсем транспарант йăтса пыраççĕ, ун çине государство гимнĕн сăмахĕсене çырса хунă:

Нихăçан арканми Союза пĕрлештерчĕ.

Пур ирĕк республикисене аслă Русь.

Пĕрин хыççăн тепри чаплă маршпа мавзолей умĕнчен пур союзлă республикăсенчи физкультурниксен колоннисем те иртсе каяççĕ. Ленинпа Сталинăн нации политики çĕнтернине, вăрçă вăхăтĕнче халăхсен туслăхĕ татах та ытларах çирĕпленсе тĕрекленнине уççăн кăтартса паракан пирĕн çĕршыври çамрăклăх Хĕрлĕ площадьне иртсе пырать.

Трибуна çинчи çынсем Украиннăпа Белорусси физкультурникĕсене — Отечественнăй вăрçă участникĕсене, хăйсен халăхĕсен ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн пынă аслă çапăсусен геройĕсене хĕрӳллĕн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Белоруссен колоннине партизан отрячĕсен 26 çулхи командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ Виктор Ливенцев ертсе пырать.

Çӳллĕ те яштака çынсем—Кавказ леш енчи республикăсен физкультурникĕсем—грузинсем, армянсем, азербайджанецсем иртсе каяççĕ. Вĕсен речĕсенче — чапа тухнă альпинистсем, гимнастсем, кĕрешекенсем—Совет Союзĕн чемпионĕсемпе рекордсменĕсем. Хĕвелпе пиçнĕ питсемпе хĕвелтухăçĕнчи пуян тумсем тăрăх хăнасем Узбекистан, Казахстан, Киргизи, Туркмени, Таджикистан спортсменĕсене палласа илеççĕ.

Карел-Финн республикипе Молдави физкультурникĕсен колоннисене çапăçу çулĕпе Сталинградран пуçласа Берлина çити утса тухса çĕршывăн нумай наградине илме тивĕçлĕ пулнă спортсмен-офицерсем ертсе пыраççĕ.

Аслă Сталина пур чĕлхепе те хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Мускав шкул ачисен 1200 çынлă тата «Трудовые резервы» ятлă чи çамрăк спорт обществин пин çынлă колонни утса тухни питĕ илемлĕ пулнă. Спорт мастерлăхĕн чи аслă шкулĕсенче вĕренекенсем —Мускаври Сталин ячĕпе тăракан тата Ленинградри Лесгафт ячĕпе тăракан физкультура институчĕсенче вĕренекенсем çав тери илемлĕн иртсе каяççĕ.

Профсоюзсен спорт обществисенчи гимнастсен пĕрлештернĕ колоннине «Çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çара мухтав!» текен саламлă лозунг илемлетет. «Крылья Советов» ятлă физкультура обществин спортсменĕсем питĕ тĕлĕнтернĕ. Авиаци ĕçĕнчи спортсменсем Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарăн вĕçекен чаçĕсене парса тăнă хăйсен продукцийĕн макечĕсене илсе пыраççĕ. «Зенит», «Металлург», «Локомотив», «Медик», «Торпедо», «Строитель» обществисен колоннисенче сынсем хăйсен юратнă спортсменĕсене — йывăр атлетсене, боксерсене, ишекенсене, чупакансене, диск ывăтакансене, кĕрешекенсене, Совет Союзĕнчи спорт юхăмне чапа кăлараканскерсене, палласа илеççĕ. Вăрçăн иртнĕ çулĕ хушшинче кăна совет спортсменĕсем Пĕтĕм Союзри 56 рекорд тунă, вĕсенчен 11-шĕ пĕтĕм тĕнчри рекордсем пулнă.

Кĕтмен çĕртен площадьре пăр хирĕç палăрать. Ку ĕнтĕ холодильнăй промышленноçăн наукăпа тĕпчев институчĕ юри туса хатĕрленĕ пăр. Илемлĕ ярăнас тĕлĕшпе Совет Союзĕн чемпионĕ ятне илнĕ Татьяна Гранаткина тата спорт мастерĕ Самсон Глязер çуллахи хĕвел хĕртсе пăхнă вăхăтрах, конькипе ярăнса, çав тери илемлĕ ташлама пултарнине кăтартса параççĕ.

Площаде çĕршыври питĕ паллă «Динамо» клубĕн спортменĕсем тухаççĕ. Çав клуба спорт кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе паллă çитĕнӳсем тунăшăн Ленин орденĕпе наградăланă. 2700 спортсмена Иван Пиняшев генерал-майор ертсе пырать. Вăл 11 боевой орденпа медаль кавалерĕ. Совет Союзĕнчи 61 чемпионпа рекордсмен, хĕрлĕ майкăсем тăхăннăскерсем, уйрăм колоннăна иртсе каяççĕ. Вĕсене «Динамо» обществи ӳстерсе çитĕнтернĕ.

Темиçе минутлăха Хĕрлĕ Площадь сад пулса тăрать: клумбăсем сиксе тухаççĕ, фонтан курăнса каять. Вĕсен хушшинче Сталин юлташăн шурă скульптурăллă кĕлетки.

Клуб начар ĕçлет

СĔНТĔР. Район центрĕнчи комсомолсемпе союзра тăман çамрăксем хăйсен пушă вăхăтне ытла та кичемлĕн иртереççĕ. Район клубĕнче уйăхра 3-4 хутчен кино кăтартнисĕр пуçне, урăх нимĕн те пулмасть. Çамрăксем клубра ташлама тата художествăллă пултарулăх кружокĕсенче вĕренесшĕн. Анчах та клуб директорĕ Алихметкина юлташ ку ĕçсемпе вуçех те интересленмест, кино пулман чухне вăл клуба пырса та курмасть.

ВЛКСМ райкомĕпе райсовет исполкомĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç ещĕпе ĕçлекен пайĕ те çамрăксен пушă вăхăтне лайăх организацилес тĕлĕшпе ертсе пымаççĕ. Вĕсем валли лекцисемпе докладсем те сайра-хутра кăна пулса иртеççĕ.

Районра физкультурăпа спорт ĕçĕсем çинчен манса кайнă, вĕсене никам та ертсе пымасть. Райсовет исполкомĕ ку тарана çитсе те физкультурăпа спорт комитечĕн председательне тупса хатĕрлемен. Стадионсемпе физкультура площадкисем тăвас тата спорт инвентарĕсем тупса хатĕрлес тĕлĕшпе те кунта нимĕн те тумаççĕ.

Г. МОИСЕЕВ.

ЯПОНИ ИМПЕРИАЛИЗМĔН ТИСКЕР ĔÇĔСЕМ

Б. ЛЕОНТЬЕВ.

XIX-мĕш ĕмĕрĕн 90-мĕш сулĕсенчен пуçласа çур ĕмĕр хушши ĕнтĕ империализмла Япони тискер те сĕмсĕр агрессорсенчен пĕрийĕ пулса тăрать. Япони пуçласа янă вăрçăсем пурте ют çĕршывсене тытса илессишĕн пулнă вăрçăсем пулаççĕ. Вĕсене пурне те питĕ тискеррĕн, пĕтĕм чĕнчери правăран мăшкăлласа, мирлĕ халăха тискеррĕн пĕтерсе пырса туса пынă. Япони империалисчĕсем яланах вăрçа кĕтмен çĕртен пуçласа янă, вĕсем вăрçă пуçласси çинчен малтанах каласа пĕтермен, хăйсем танăннă çĕршыври халăха нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пынă. Китай, Маньчжури, Корея, Монголи, Индокитай, Малайя, Филиппин утравĕсен, Голланди Индийĕн, Лăпкă океанри утравсен халăхĕсем, Советăн Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи хулисемпе ялĕсенчи çынсем Япони «самурайĕсен» преступникле тискер ĕçĕсене ĕмĕрне те манас çук. Çав Япони «самурайĕсем» пĕтĕм тĕнчене тытса тăма шутланă.

Владимир Ильич Ленин Корейăна чăралантарнă Япони захватчикĕсем çинчен каланă май, вĕсене питлесе çапла çырнă: «Кунта паркомăн пур меточĕсене те, техника çĕнĕрен тунă пур лайăхлатусене те Америка асаплăхсен системине, ĕмĕрне илтмн тискерлĕхпе пĕрлештернĕ».

Феодаллă-буржуаллă милитаризмăн çăлти сийĕн влаçĕ аллинчи Япони агрессиллĕ государствăн чи кăтартуллă тĕслĕхĕ пулса тăнă. Унăн вăрçă тата ют çĕршывсен территорийĕсене тăтăшах тытса илессин унăн тулашĕнчи тата шалти политикин никĕсĕ пулса тăрать.

1894 çулхи август уйăхĕнче Япони агрессине хирĕç тăма хатĕрленмен Китая танăннă. Китай çарĕсем çав тери паттăрăн хирĕç тăнă пулин те (сăмахран, Вейхайпа патĕнче), чылай лайăхрах хĕçпăшалланнă японецсем ку вăрçăра Китая çентерсе ăна çаратуллă мир условийĕсем йышăнтарнă. Çав условисем тăрăх, Китай Корейăна ялавлăхах çухатнă, Японне Формоза утравĕпе Пескадорски утравсене панă тата Японне 350 миллион мен контрибуци тĕленĕ.

1904 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Японин тинĕс флочĕ, вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕрех, вырăссен Порт-Артурта тăракан эскадрине тапăннă. Вара февралĕн 10-мĕшĕнче тин Япони Российăна хирĕç вăрçă пуçлани çинчен официальнăй йĕркене пĕлтернĕ. Патша самодержавийĕ вăрçа çав тери начар хатĕрленнине пула тата патша чиновникĕсемпе генералĕсем преступникле тирпейсĕр ертсе пынине пула, ку вăрçăра Россия парăннă.

Тип çĕр çинче те, тинĕсре те вăрçа организацилеме пултарайман патша правительстви, хăйĕн халăхĕнчен, халăх революцийĕнчен хăраса ӳкнĕскер, васкасах Портмутри мире тунă. Ку мир Российăшăн питĕ йывăр пулнă, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра Японин ресурсĕсем пĕтĕмпех пĕтесси патне çитнĕ.

«Вырăс халăхĕ мар, самодержави намăслăн парăнчĕ»,—теçĕ Ленин. «Патша Российин каялхипаллăхĕмĕн халăх питĕ хаклă тӳлерĕ»,—тесе кăтартса парать «ВКП(б) Историйĕн Кĕске курсĕ».

1918 çулта Япони çамрăк Совет республики çине тетах та ултавлăрах та вăрă-хурахла тапăнчĕ. Японн интервенцине хирĕç совет халăхĕ паттăрла кĕрешĕве тухса ответ пачĕ. Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи партизансем ĕмĕр асран каймăн мухтавлă ĕçсем турĕç. Ун çинчен халĕ пире хаклăх юррисем каласа параççĕ. Япони захватчикĕсем хăйсене юнлă преступленисемпе вараларĕç. Вĕсем Совет Приморьин нумайлăхĕсене çаратрĕç, Вăтам Çĕнĕрти пекла районсене кĕрес тесе, темĕн пек тăрăшрĕç.

Ун чухнех Ленин Япони империалисчĕсен янсене калкан планĕсене тавăрса илнĕ, пирĕн çĕршывăн пуласлăхĕмĕн ССР Союзĕн шалти тылри районĕсем—Çĕнĕрпе Урал мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине уйăмах хыттăн асăрхаттарнă. Унтан гитлерла Германие хирĕç пынă Отечественнăй вăрçăра çав районсем ĕнтĕ нимĕç пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

РКП(б) Центральный Комитечĕн 1918 çулхи майăн 6-мĕшĕнчи постановленийĕнче, Ленин аллипе сырнăскерĕнче, çапла каланă:

«Мĕнпур вăя Уралпа Кузнецк районне тата территорине Японирен те, Германирен те сыхлас ĕçе ямалла».

Ленинпа Сталин Япони империализмĕн ĕмĕтне малтанах курса тăнă. 1918 çулхи апрелĕн 7-мĕшĕнче Владивостока Ленинпа Сталин алă пусса янă специальнăй телеграммăра çапла каланă: «Японецсем наступлени тăвасçĕ пулмалла... Çавăнпа та нимĕн чухлĕ те тăхтаса тăмасăр тĕплĕн хатĕрленме тытăнмалла, мĕнпур вăйпа хатĕрленмелле».

Япони захватчикĕсем Приморьере тата Байкал леш енче 1918—1922 çулсенче тунă преступленисене нимĕç фашисчĕсем хальхи вăрçăра тунă тискерлĕхсемпе çеç танлаптарма пулать. Провокаци, террор, ялсемпе хуласене тĕппипех çаратни, карательнăй отрядсен экспедицийĕсем, хĕрăмсенчен мăшкăллани, Хĕрлĕ Çăран тытăкăна лекнĕ боецсене, партизансене тата мирлĕ халăха массăллăн вĕлерни, çынсене чĕрĕллех çунтарса яни—çаксемпе пуринне те японецсем ун чухнех анлăн усă курнă.

Кунта эпир Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Япони интервенчĕсем пулнă вăхăтри нумай документсенчен хăшĕпĕр фактсене илсе кăтартăпăр.

«1920 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче Вяземская ялĕнче ывăлĕсем партизанра пулнăшăн Власюка, Ковале, Погорелова хăйсен килĕсенчех чĕрĕллех çунтарса янă. Отрадная ялĕнче 1919 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче японецсем 22 хресчен хуçалăхне, ывăлĕсем партизана кайнă тесе айăпласа, çунтарса янă. 8 старике (Нискунова, Костряга, Иванчюка тата ыттисене те), ывăлĕсем партизанра тесе, ĕçерсе пăрахнă» («Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Советсемшĕн кĕрешнисем» ятлă сборникрен, 1932 çулта пичетленсе тухнă).

«Раздольнăйра... японецсем вырăс казармисене хупăрласа янă те салтаксене тата поселокри мирлĕ халăха тискеррĕн персе пăрахма тытăннă. Япони салтакĕсем пурте ӳсĕр пулнă. Вĕсем хăйсен куçĕ умне пулнисене пурне те пере-пере пăрахнă, хĕрарăмсемпе ача-пăчасене те шеллемен.

Çакнашкал тискер ĕç çĕркаçах пынă. Ирхине вара куç умне çав тери хăрушă картина тухса тăнă. Площадьре çынсемпе лаша виллисем тулли пулнă, пӳрт-çуртсене пульăсем ала пек шăтарса пĕтернĕ. Нумай çуртсемпе учрежденисен ăшне тустарса тухнă, хаклă япаласене вăрласа кайнă». («Красное знамя» хаçат, 48 №, 1920 çулхи май уйăхĕ).

Японн интервенчĕсен 1920 çулхи апрель уйăхĕнчи пысăк провокацийĕ Владивостокра, Хабаровскра, Никольск-Уссурийскинче, Спасскра, Шкотовăра, Раздольнăйĕнче, Посьетре тата ытти хуласемпе ялсенче тунă тискер преступленисемпе палăрса тăрать.

Апрелĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле японецсем, хăйсен обязательствине пăсса, революцилле çар чăсĕсемпе мирлĕ халăх çине вăрă-хурахла тапăннă. Вĕсем совет çыннисене тискеррĕн пĕтерсе пынă.

«Апрелĕн 6-мĕшĕнче Хабаровск урамĕсенче çав тери хăрушă пулнă. Пур çĕрте те вилнĕ тата аманнă çынсем йăваланса выртнă,—тесе вулатпăр эпир «Красное знамя» хаçатăн 1920 çулхи майăн 22-мĕшĕнче тухнă номерĕнче. — Вилнисене пухаканнисем тата юн юхтарса выртакан аманнă çынсене, урамсенче, тротуарсенче тата ишĕлтернĕ е çунтарса янă çуртсем хушшинче выртаканскерсене, пулăшу параканни никам та пулман, мĕншĕн тесен японецсем хăйсен куçĕ умне пулнă çынсене пурне те персе пăрахнă.

Япони салтакĕсем Хабаровскра тунă тискер ĕçсем шутнех тата хулан украинецсем пурăнакан пайĕнчи пур хĕрарăмсене те тенĕ пек мăшкăл туни кĕрет».

Çакăн пек тискер ĕçсене вĕсем пур çĕрте те тунă. Акă Кневичи ялĕнчи граждансен пухăвĕн протоколĕнче темиçе йĕрке. «Японецсен штабĕпе юнашарти уйрăм çуртра арестленисене шомполсемпе, саламатсемпе тата ыт. ялалапа та хĕнерĕç. Раснах Ф. Жамский тата Гончарук граждансене хытă асаплантарчĕç. Вĕсене хĕртнĕ шомполпа хĕнерĕç, пӳрнесем хушшине патаксем чиксе пӳрнесене пăрчĕç тата ытти тĕрлĕ тискер асапсем те кăтартрĕç. Çапла вара кунта кун каçах халăха асаплантарчĕç».

Халăх ирĕклĕхшĕн паттăрăн кĕрешнĕ çынна, партизанла юхăмăн организаторне Лазо большевикпа унăн икĕ юлташне интервентсем тытса çав тери тискеррĕн вĕлернĕ. Вĕсене чĕрĕллех паровоз камăкинче çунтарса янă. Лазо вилнĕ хыççăн халăхăн Япони империалисчĕсене курайманлăхĕ татах та вăйлăрах сарăлса кайнă.

Япони интервенцийĕ 4 çул ытларах пынă. Хĕрлĕ Çăран паттăр кĕрешĕвĕ, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи халăх массисен партизанла вăхăтлă юхăмĕ Япони империализмĕн захватчикла пур планĕсене те пăрахăça кăларчĕ. Çамрăк Совет республики Инçетри Хĕвелтухăçĕнче татăклă çĕнтерӳ турĕ. (

Çав çулсенче большевиксен партийĕ Япони интервенцине хирĕç пынă кĕрешĕве çав тери ăста организацилеме. Партизи чи лайăх ывăлĕсем, Российăна ирĕке кăларас тесе, хăйсен пуçĕсене хучĕç. Ленинпа Сталин Хĕрлĕ Çăран ĕçĕсене, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Совет влаçне тăвассине тата партизанла юхăма ертсе пычĕç.

1922 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Владивосток хулине ирĕке кăларнă. Ун чухне Ленин пирĕн Приморье Совет çĕршывĕшĕн мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă: «Владивосток инçетре, анчах та ку хула хамăран-çке»,—теçĕ вăл. Инçетри Хĕвелтухăçне интервентсенчен ирĕке кăларнă ятпа Ленин «çак çĕнĕ çĕнтерӳ ячĕпе Российăри пĕтĕм ĕççыннисене, паттăр Хĕрлĕ Çара» саламланă.

Ун хыççăнхи çирĕм çул хушшинче Японин ĕçĕсем апрессиллĕ атакăсем тунипе, вăрă-хурахла тата ирĕккĕрсен тапăнипе, ют çĕршывсен территорийĕсене туртса илнипеналлă пулса тăраççĕ. 1932 çулхи март уйăхĕ тĕлне Япони Маньчжурие оккупацилесе, ăна хăйĕн колонийĕ туса хучĕ. 1937 çулта японецсем Китая пырса кĕчĕç. Япони çарĕ ку таранччеиех Китайăн çур территорине йышăнса тăрса, унта террорла ĕçсемпе тискерлĕхсем тăвать.

Çак çулсем хушшинче Япони пирĕн çĕршыва та темиçе хутчен вăрă-хурахла тапăнса пăхрĕ. Вăл пирĕн чикĕре тĕрлĕрен провокацисем тунă пирки темиçе хутчен те самаях пысăк çапăçусемех пулса иртнĕ. Хĕрлĕ Çар хамăран юратнă Советлă Таван çĕршывăн интересĕсене сыхласа, Япони захватчикĕсене темиçе хутчен те хаяр уроксем пачĕ. 1938—1939 çулсенчи Хасан кӳлли патĕнчи, Халхин-Гол шывĕ патĕнчи çапăçусене пурте астăваççĕ. Çав çапăçусенче Хĕрлĕ Çар Япони çарĕсене тĕппипех аркатса тăкрĕ.

Япони вăл тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пуçласа яракан агрессиллĕ государствăсенчен пĕрийĕ пулса тăрать. «ВКП(б) Историйĕн Кĕске курсĕнче» çапла кăтартса панă: «Тĕнчен тĕрлĕ енче агрессиллĕ пиçĕ государство—Германи, Итали тата Япони вăрçă пуçласа яракансем пулчĕç». 1941 çулхи декабрь уйăхĕнче японецсем, Америкăпа Англин Лăпкă океанри çĕрĕсене вăрă-хурахла тапăнчĕ. Вăрçăн малтанхи çулĕнчех вĕсем акăлчансемпе американецсен, французсен, голланецсен, португалецсен çĕрĕсене тытса илчĕç.

Вăрçă пуçласа яма тăрăшакан агрессиллĕ халăхсем, вăрçă вăрçма чылай малтан вăй пухса хатĕрленĕ пирки, вăрçă пуçланнă чухне мире юратакан халăхсенчен яланах вăйлăрах пулаççĕ. Истори енчен çак тĕрĕс пулнине кăтартнă май, Сталин юлташ императорла Японипе гитлерла Германие палăртса хăварнă.

«Пирл-Харборти «инцидент» пек, Аслă океанри Филиппин тата ытти утравсене çухатни пек, Гонконгпа Сингапура çухатни пек пăшăрхантаракан фактсене ăнсăртран пулнă тесе шутлама çук;—тенĕ Сталин юлташ 1944 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче,—ун чухне Япони агрессиллĕ нацп пулса тăрса, мире юратакан политикăна тытса пынă Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен вăрçă вăрçмашкăн ытларах хатĕрленсе çитнĕ пулнă».

Германипе Японин генеральнăй штабĕсен планĕсенче агрессорсем СССР территорийĕнче, Инди территорийĕнче «тĕлпулмалли» чи сĕмсĕр ĕмĕтсем пулнă. Вĕсене пĕр-пĕринпе 1936 çулта тунă «Коминтерна хирĕçле пакт», Берлин—Рим—Токио тесен ухмахла «тĕнĕл», ССР Союзне тата ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсене тискерле курайманлăх, ытти халăхсем хушшинче пуçпулса тăма тăрăшни пĕрпĕринпе сыхăнтарса тăнă.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă вăхăтĕнче Япони Германи фашисчĕсене тăтăшах пулăпса пынă. Германи союзникĕ Япони Совет чиккисенче питĕ пысăк çар тытса тăнă. Вара Япони кĕтмен çĕртен тапăнинчен хӳтĕленес тесе, пирĕн хамăран та Германие хирĕç кĕрешме кирлĕ çарсене çав чикĕре тытса тăмалла пулнă.

Çав вăхăтрах Япони ССР Союзĕн союзникĕсене—США-на тата Великобритание провокацилле тапăнса гитлерла Германие пулăшу панă.

1945 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет çинчен тунă пакта пăрахăçа кăларасси пирки тунă заявленипе пирĕн правительство çапла палăртрĕ: «Япони, Германин союзникĕ, Германие ССР Союзне хирĕç вăрçа пуламать».

Япони империалисчĕсем пĕтĕм тĕнчене чăралантармалли тискер плана тахçанах туса хунă. Çирĕм çул каярах Японин премьер-министрĕ Танака генерал Япони императорне вăрттăн документ панă. Çав документ, «Танака меморандумĕ» ятлăскер, японецсем тĕнчере пуçпулса тăмалли программа пулса тăрать. Меморандумра Маньчжурие тытса илни Китая пăхăнтарас ĕçĕн малтанхи сыпăкĕ пулнине, Китая пăхăнтарни вара «Азири ытти мĕнпур çĕршывсене» тытса илмелли малаллн утăм пулнине палăртнă. Меморандумра çапла каланă: «Пирĕн нацийĕ ӳсĕмĕн программине хамăран хĕçе Россия хĕçĕне хирĕçтерессине кĕртме тивет пулмалла...»

Японире пуçпулса тăракан ушкăн японецсен ăстăнне японецсем тĕнчере пуçпулса тăрассин фашистла идейисене, японецсен нацийĕ раса тĕлĕнĕнчен çĕр çинчи ытти халăхсенчен пурничен те лайăхрах пулнин идейисене тăтăшах кĕртсе пынă. Расăсем çинчен калакан тискер кайăкла идеологи Японири миллионнăр çынсен ăстăнне пăснă, вĕсем вара китаецсене, индуссене, американецсене, вырăссене курайми çынсем пулса тăнă.

Япони империализмĕн чи путĕр те сĕмсĕр пропагандисчĕсенчен пĕрийĕ—Араки генерал шухăтнса каланă сăмахсем: «Эпир пĕтĕм тĕнчене эпир милитаристсен нацийĕ тесе калатпăр», «Нимĕн хĕрхенмесĕр вĕлерĕр», «Европăна Америкăна тăниналла Японин, Азин, шухăш-кăмăлне кăтартса парăр», тесе каланисем Япони çарĕне лозунгсем пулса тăнă.

Японире тăтăшах улăпăнса пынă правительствăсем практикăра пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăмалли ухмахла программăна пурнăçа кĕрсе пынă. Китайри юлă интервенци, Совет территорине тапăнни, Пирл-Харбора, Филиппин утравĕсене, Çĕнĕ Гвинейăна, Малайăна Бирмăна тапăнни, Индие, Монголи халăх республикин территорине çĕмĕрсе кĕме хăтланни—çакăн пек ĕнтĕ Япони империалисчĕсен захватничĕсем.

Гитлеровецсем Европăра «çĕнĕ йĕркене» тунă пекех, Япони империалисчĕсем те «Хĕвелтухăç Азири сферăна» туса хатĕрленĕ. Çак «сферăра» халăхсенчен нацийĕ харăнăлăха турăса илме, халăхсене Япони захватничĕсен чурисем туса хума палăртнă. Политикăпа экономика тĕлĕнчен пĕтĕмпех чăралантарни, миллионнăр ĕççыннисене вĕлерсе пĕтерни—акă мĕн кӳнĕ пур çĕрте те Япони захватничĕсем.

Японин вăрă-хурахла империализмĕ совет халăхĕ тата ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен чи хаяр тăнманĕ пулса тăрать. Анчах та Япони çарĕсем тунă мĕнпур тискерле преступленисемпĕн тавăрас вăхăт инçех мар. Совет правительстви союзниксем умĕнчи хăйĕн тивĕçне тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырса, союзла державăсем июлĕн 26-мĕшĕнче тунă заявленипе килĕпсе, августăн 9-мĕшĕнче Японне хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ.

Совет халăхĕ агрессиллĕ Японне хирĕç вăрçă пуçланинне хамăран Таван çĕршывăн интересĕсене килĕшӳллĕ ăслă та тĕрĕс решени вырăнне хурса, пĕр кăмăллăн ырларĕ. Япони агрессорне аркатни мир тăвас вăхăта сывхартмалли, хамăр чикĕсенчи хăрушăха сирсе ямалли, халăхсене малашнехи жертвăсемпе асапсенчен хăтармалли пĕртен-пĕр мел пулса тăнине совет халăхĕ пĕлет. Паттăр Хĕрлĕ Çар Сталин генилле ертсе пынипе Япони агрессорне хирĕç пыракан тĕрĕс вăрçа çĕнтерӳ туниие вĕçлĕ.

«Правда», августăн 11-мĕшĕ.

Союзниксен Берлинри комендатурин пиллĕкмĕш ларăвĕ

БЕРЛИН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 9-мĕшĕнче Берлин комендантĕсен пиллĕкмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Паркс генерал (США) председатель пулса ертсе пынă.

Союзниксен комендантĕсем Берлин хулине мĕн чухлĕ кăмăл кирлĕ пулассине тĕплĕн пăхса тухнă тата Берлин промышленноçĕпе коммунальнăй хуçалăхне 1945 çулхи декабрь уйăхĕн вĕçне çитичченкăмăл парса тăмалли плана çирĕплетнĕ.

Культура тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин докладчĕ тăрăх комендантсем çапла йышăннă: Америка, Англи, Франци тата Совет Союзĕ контроллесе тăракан территорисем çинчи театрсемпе кинотеатрсен ĕçне тивĕçлĕ çĕршывсен комендантĕсем тĕрĕлесе тăраççĕ. Союзлă çĕршывсенче ӳкерсе кăларнă кинофильмсене цензура малтанлăха пăхса тухмасăрах кăтартаççĕ. Ятарласа тунă прокат конторисем урлă кинофильмсене союзлă çĕршывсем пĕрпĕринпе улшăнтарса илме пултараççĕ. Союзлă çĕршывсенче кăларнă кирек мĕнле фильма та оккупацилеме мĕнпур зонăсенчи кинотеатрсенче кăтартма пулать. Союзниксен комендатури бургомистрсене çакăн пек кăтарту панă: Берлинри ертсе пыракан театрсенче ĕçлекен артистсене апат-çимĕç чи пысăк нормăсемпе пямалла.

Совет коменданчĕ Горбатов генерал-полковник сĕннипе, союзниксен комендантĕсем комендатурăн официальнăй органне—нимĕçле хаçат кăларма йышăннă. Çав хаçата кăларассине сыхăнса тăракан практикăллă ыйтусене пурне те ятларласа тунă комисси пăхса тухса хатĕрлет те вĕсене вара союзниксен комендантĕсем черетлĕ ларăвĕнче çирĕплетме тăратать.

Берлинри халăх валли пахчăçинчĕ хатĕрлес ĕçе хула самоуправленийĕн пуçарулăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, союзниксен комендантĕсем çак ыйтăва ятараса тунă комиссире пăхса тухма тата комиссин сĕнĕвĕсене çитес ларура тăратма хушса хăварнă.

Союзниксен комендантĕсем Берлин халăхне апат-çимĕç парса тăмалли тĕплĕ плана çирĕплетнĕ, кашни çĕршыв мĕн чухлĕ апат-çимĕç тăратассине тата союзниксем пĕр-пĕринпе расчет тумалли йĕркене палăртса хунă. Нимĕç çыннисене оккупацленĕ пĕр зонăран тепĕр зонăна куçарни халăха шута илес тата продовольстви карточкисем парас ĕçе пăтраштарусем кӳме пултарнине шута илсе, союзниксен комендантĕсем халăха пĕр зонăран тепĕр зонăна харпăр-хăй ирĕкĕпе куçса çӳреме татăклăнах чарнă. Урăх зона территорине халиччен куçса кайнисене çав вырăнта продовольстви карточкисем памаççĕ, вĕсене малтан пурăннă вырăнах валлла куçарассĕç.

Союзниксен комендантĕсем йышăннă тăрăх, Пысăк Берлинăн оккупацленĕ зонписенче пуринче те нимĕç çыннисене официальнăй вăхăтпа 23.00 сехетрен пуçласа 05 сехете çитиччен урама тухма чарнă. Çак распоряжени 1945 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчен законлă пулса тăрать.

Август уйăхĕнчен пуçласа союзниксен комендантĕсенчен кашни главнăй комендантăн ĕçĕсене халиччен йышăннă пек икĕ эрне хушши мар, пĕрер уйăх туса пырать. Çавна май Паркс генерал—главнăй комендант пулса августăн 31-мĕшĕнчен, Лайн генерал вара сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕше çитиччен ĕçлеççĕ. Де Бошен генерал главнăй комендантăн ĕçĕсене тума октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнать.

Союзниксен комендантĕсем нимĕç халăхĕнчен хаклă япаласене конфискацилесси çинчен тата Берлин хулинче укçа-тенкĕ çӳретмелли йĕрке çинчен калакан приказене çирĕплетнĕ. Çавăн пекех хулари автомашинăсене регистрацилемелли йĕрке çинчен тата хулари автотранспорта ятарласа пропусксем парасси çинчен решени йышăннă.

Главнăй комендант Паркс генерал çапла пĕлтернĕ: августăн 12-мĕшĕнчен пуçласа Франци çарĕсем, каласса татăлса килĕшӳ тунă тăрăх, вĕсене Берлина оккупацилеме уйăрса панă зонăна йышăнаççĕ, çав кунран пуçласа Франци комендантĕ де Бошен, союзниксен ытти комендантĕсемпе пĕр тан правăсем тăрăх, Берлин хули комендантĕн ĕçĕсене тума тытăнать.

Петэна суд туни

ПРОКУРОР АЙĂПЛАНАКАНА ВĔЛЕРМЕЛЛИ ПРИГОВОР ЙЫШĂНМА СĔННĔ

ПАРИЖ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Петэн ĕçĕпе пыракан судра генеральнăй прокурор Морне айăпласа сăмах калать, унăн сăмахĕ 5 сехете пынă. Вăл Петэна сутăнчăк тесе айăплать. Петэн, тет Морне, Франципе намăслантарчĕ, ăна вăл чăралăха кĕртсе ӳкерессĕн пулчĕ, ăна çĕнтерекене парăнтарасшăн, унăн законĕсене пăхăнтарасшăн пулчĕ. Халăх ăна çăкăнăшăн касарма пултараймасть. 4 çул хушши Петэн республика стройне хирĕç, государствăн шалти хăрушăлăхне хирĕç преступленисем туса пынă. Петэн парăнман Франци флотне союзниксем майлă çапăçма чарнă. Франци каранăсем пĕтнишĕн чи малтан Петэн айăплă. Вăл Сирири базăсене нимĕçсен аллине панă; вăл Франци салтакĕсене Çурçĕр Африкăра союзниксене хирĕç кĕрешме приказ панă; ятарласа тунă судсем Франци патриочĕсене вĕлермелли приговор йышăннă; вăл Германи майлă вăрçакан «доброволецсен легионне» тума хавхалантарнă.

Петэн сутăнчăк пулни çакăнтан курăнса тăрать, тет Морне, вăл темиçе пиншер çынна пăсакартарнă, заложниксем тунă, çĕршер пин рабочие çĕршывран Германие ăсатнă, пиншер çынна политика тĕлĕшпе арестленĕ, Франци флотне пĕтерсе лартнă, Франци халăхне намăслантарнă.

«Петэн маршал текен çынна, — тесе вĕçленĕ хăйĕн сăмахне прокурор,—апĕ вĕлермели приговор йышăнса, вĕлерме йышăнтăр».

МИХАЙЛОВИЧ БАНДИН ПУСЛАХĔСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННА СУД ПРИГОВОРĔ

БЕЛГРАД, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 9-мĕшĕнче Драже Михайлович ертсе пынă «Тĕп наци комитечĕ» тенискерĕн членĕсем пирки аслă çар суччĕ хăйĕн приговорне вуласа панă. Хĕçпăналлă четниксен командирĕсем пулнă Лукасевича, Косоровича, Войновича тата террорист-диверсанта Гаспаровича суд перçе пăрахмалла тунă. Айăпланакан Джуровича 20 çуллăха хупса лартмалла тунă. Ытти айăпланакансене пĕр çултан пуçласа 15 çул таран хупса лартмалла тунă. Приговор татăклă, ун пирки жалоба йышăнмаççĕ. Перçе пăрахмалла тунисем пĕр талăк хушшинче АВНОЮ президиумĕнчен вĕлересрен çăлса хăварма тархасласа ыйтма пултараççĕ. Приговор вуласа пĕтерсен, курма пынă халăх ăна тăвăллăн алă çупса ырланă.

ГИТЛЕР ПАРТИЙĔН ТĔП ХАÇАЧĔН РЕДАКТОРĔ ПУЛНАСКĔРНЕ ТЫТСА ХУПНИ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Берхтесгаден çывăхĕнче Гитлер партийĕн «Фелькишер беобахтер» ятлă тĕп хаçачĕн главнăй редакторĕ пулнă Вильгельм Вейдса тытса хупнă. Çав хаçатăн редакторĕ пуличчен вăл «Германири пичет союзĕн» председателĕ пулнă, ăна хăй вăхăтĕнче СА обергруппенфюрер чинне панă.

АВНОЮ ЙЫШĂННА РЕШЕНИ

БЕЛГРАД, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян АВНОЮ (Югослави халăхĕн фашизма хирĕçле Вечни) ларăвĕнче, президиум сĕннипе маланне Демократиллĕ Федерацийлĕ Югослави халăхĕн Вăйăтлăх Скупщини ятне илесси çинчен пĕр сасăллă пулса решени йышăннă. Депутатсен клубĕ тата халăх фрончĕн членĕсем сĕннипе лару пĕр сасăллă пулса Югослави çарне чĕнсе каланинне йышăннă, унта Югославие ирĕке кăларассинĕн ним шеллемесĕр кĕрешнĕ боецсене, офицерсене тата генералсене тав тунă.

Çакăн хыççăн Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Кардель Югослави правительстви паянхи ларура король тунă заявленипе пирки йышăннă решение вуласа панă. Король регентсен власне каялла илсе, король власне тепĕр хут хăй çине илесси çинчен пĕлтернĕ пулнă. Югослави правительстви тунă заявленипе çапла каланă: Тито маршалпа король правительствин Министерсен Совечĕн председателĕ Шубашич доктор тунă килĕшӳ тăрăх, король власĕ регентсен аллине куçнă. Король çĕршыва таврăнас ыйтăва пăхса тухассине учредительнăй пуху йышăнничен хăварнă. Югослави правительстви калана тăрăх, çав килĕшӳпе союзлă аслă державăсен—Совет Союзĕн, Англин, США-н правительствисем ырланă, король хăй та ăна ырланă пулнă. Заявленипе король указĕ çинчен каланă. Çав указ тăрăх, учредительнăй пуху йышăнничен король хăйĕн полномочийĕсен регентсен аллине панă пулнă. Югослави правительстви çапла каланă: учредительнăй пуху государство тытăмĕн ыйтăвĕ пирки татăклă решени йышăначчен король çĕршыва таврăнма та, король власне хăй çине илме те пултараймасть.

Правительство заявленине вуласа панă хыççăн АВНОЮ президиумĕн председатель заместителĕ Моша Пьяде сăмах илнĕ. Королĕн заявленине сӳтсе-явма та кунта тивĕçлĕ маррине шута илсе, вăл ытти ыйтусем çине куçма сĕннĕ. Пьяде панă сĕнĕве пумайччен тăвăллăн алă çупса ырланă.

СОВЕТ ОФИЦЕРĔСЕНЕ РУМЫНИ ОРДЕНĔСЕМПЕ НАГРАДАЛАНИ

БУХАРЕСТ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем король указне пичетлесе кăларнă. Указра Совет офицерĕсене Румыни орденсемпе наградăлани çинчен каланă. «Румыни Çăлтăрĕ» ятлă командор орденĕпе тата унăн хĕçĕсемпе, «Вăрçăри паттăрлăх» ятлă лентăпа пĕрле 18 полковника 14 подполковника наградăланă; «Румыни Çăлтăрĕ» ятлă офицер орденĕпе тата унăн хĕçĕсемпе, «Вăрçăри паттăрлăх» ятлă лентăпа пĕрле 35 майорпа 24 капитана наградăланă; «Румыни Çăлтăрĕ» ятлă кавалер орденĕпе тата «Вăрçăри паттăрлăх» ятлă лентăпа 3 старшн лейтенанта, 7 лейтенанта тата 6 кĕçĕн лейтенанта наградăланă.

«Вăрçăри паттăрлăхшăн» ятлă иккĕмĕш класри медальпе 2 сержанта наградăланă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи типçĕр вăйăсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: американецсен Окинава утравĕ çинчи 300 бомбардировщикĕпе истребительĕ японецсен Хонсю, Сикоку тата Кюсю утравĕсем çинчи аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çĕр çинче Япони самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Августăн 8-мĕшĕпе 9-мĕшĕнче Америка çарĕнчи авиаци самолечĕсем 90 судна шыва путарнă е сиенленĕ. Вăл шутра —пĕр пысăках мар авианосец, пĕр эсминец, грузсем туртнă 5 судно тата 52 десант судни.

ВАШИНГТОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флот командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: августăн 10-мĕшĕнче американецсен авианосецсем çинчен вĕçсе улăхнă самолечĕсем Токогама хулинчен çурçĕртерехре 400 миля тăршшĕ йышăнса выртакан района атакăланă. Туллимар даннăйсем тăрăх, çĕр çинче японецсен 60 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 49 самолетне сиенленĕ. 11 паровоз, 5 чугун çул составне пĕтерсе тăкнă, пĕр эскорт эсминецне тата грузсем туртнă 4 судна сиенленĕ. Çав тапăнăва Англи самолечĕсем активлăн хутшăннă, вĕсем çĕр çинче японецсен 9 самолетне пĕтерсе тăкнă, 14 самолетне сиенленĕ.

ЛОНДОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи типçĕр вăйăсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америка çарĕнчи авиаци самолечĕсем японецсене, августăн 11-мĕшĕнче пĕлтернисĕр пуçне, тата 57 судно шыва путарнă. Американецсен Окинава утравĕ çинчи 500 яхăн бомбардировщикĕпе истребительĕ Японин Кюсю утравĕ çинчи Кумамото хулипе Оита хулине тапăннă. Унсăр пуçне тата Америка самолечĕсем японецсен Сурçĕр Китайри гидросамолечĕсен бази çине тата Шанхай районĕнчи аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Америка бомбардировщикĕсемпе истребителĕсен соединенийĕсем японецсен Целебес, Гальмагера тата Çĕнĕ Гвинея утравĕсем çинчи объекчĕсене тапăннă.

ВАШИНГТОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: августăн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче Америкăпа Англи самолечĕсем, авианосецсем çинчен вĕçсе хăпарса, Японин Хонсю утравĕн сурçĕртерехре 400 миля тăршшĕ йышăнса выртакан района атакăланă. Туллимар даннăйсем тăрăх, çĕр çинче японецсен 60 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 49 самолетне сиенленĕ.